М. Ю. ЛЕРМОНТОВ

# Ю Р Ă

ИВАН ЁМПУПЕ ÇАМРАК
СЫХЛАВÇĂ ТАТА САТУР
КАЛАШНИК ХУÇА ÇИНЧЕН
ХУНĂ ЮРĂ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1940

# ЛЕРМОНТОВПА ИВАНОВ

Константин Васильевич Иванов 13 ҫулхи ача чухне Чӗмпӗрти Чӑваш шкулне вӗренме кӗнӗ. Унӑн ӗмӗрӗ, кӑшт-кашт тухса ҫӳренисене шута илмесен, пӗтӗмпех ҫавӑнта иртнӗ. Чӗмпӗр хули пӗтӗм этемлӗх историйӗнче, вырӑс халӑхӗн литературинче ӗлӗкренех пысӑк вырӑн йышӑнса пынӑ. Унта Карамзин, Гончаров, Григорович, Дмитриев, Языков тата ытти писательсем ҫуралса ӳснӗ. Чӗмпӗр хулинчех пӗтӗм тӗнчери этемлӗхӗн, пролетари революцин генийлӗ ҫулпуҫӗ Владимир Ильич Ленин ӳссе ҫитӗннӗ.

Ҫапла ӗнтӗ, Иванов культурӑллӑ та ватӑ, паллӑ хулара пурӑннӑ, Ленин ача чухне утнӑ Мускав урамӗ ятлӑ урам тӑрӑх ҫӳренӗ, аслӑ писательсем пурӑннӑ ҫуртсен умӗнчен пуҫ тайса иртнӗ.

Сӗве шывӗ хӗрринче 80 ҫул хушши ӗнтӗ чӑвашсен малтанхи шкулӗ, хальхи педагогика училищи ларать. Унӑн шавлӑ йывӑҫӗсем айӗнче ҫамрӑк гимназист Владимир Ильич

Ульянов - Ленин та ҫӳренӗ, чӑваш ачине Охотников Никифора вӗрентсе, гимназишӗн ҫитӗнӳ аттестачӗ пама пулӑшнӑ. Ленин тивлечӗпе 1887 ҫулта Охотников Хусан университетне кӗнӗ, анчах йывӑр пурӑнӑҫра туяннӑ туберкулез чирӗ ӑна вӗренсе тухас умӗн ҫӗре кӗртнӗ.

Иванов вӗреннӗ вӑхӑтра Чӗмпӗр шкулӗнче хирӗҫӳсем пулкалана. 1905 ҫулхи революци хумӗсем вӗренекенсене ҫунатлантарнӑ. Константин Иванова 1906 ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗнче шкулӑн пӗрремӗш курсӗнчен хӑваласа кӑларнӑ. Кун хыҫҫӑн вӑл пӗр ҫул хушши хӑйӗн тӑван ялӗнче пурӑннӑ.

Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗн директорӗ Константин Ивановӑн вӑйлӑ талантне витӗрех пӗлсе тӑнӑ, унӑн шыв пек юхакан чӗлхин пуянлӑхӗпе усӑ курасшӑн пулнӑ, ӑна 1907 ҫулхи кӗркунне хӑй патне калла чӗнтерсе илнӗ.

— Усӑллӑ ҫын пул, Константин! „Библия" кӗнекине куҫарас пулать,—тенӗ ӑна Яковлев.

Константин Иванов, чӑваш поэзийӗн шӑнкӑр-шӑнкӑр юхӑмне чунӗнчен юратакан шӑнкӑрчӑ чӗппи, кӑвак пӗлӗт сӑнӗ ӳкекен таса ҫӑлкуҫ патне туртӑннӑ. Ҫак ҫӑлкуҫ уншӑн вырӑс халӑхӗн чаплӑ поэчӗ Михаил Юрьевич Лермонтов пулса тӑнӑ. Вӑл унӑн „Иван ӗмпӳпе ҫамрӑк сыхлавҫӑ тата сатур Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юра" ятлӑ поэмине куҫарнӑ. Вӑл куҫару ӗҫӗ ҫине пысӑк тимлӗх-

пе пăхнă, халăха лайăх ăнланмалла тăвасшăн пулнă. Вăл хăйĕн кусарнине чи малтан хут пĕлмен çынна, шкул хуралçине, юмахсемпе юрăсен ăстине Микки Иванне, унтан Яковлева вуласа панă. Яковлев Иванов куçарнинчен тĕлĕннĕ, аслă вырăс поэчĕ чăваш чĕлхинче вырăслинчен пĕртте начар янăраман. Каярахпа Иванов Лермонтовăн „Чул ту", „Парус", „Пурăнăç курки", „Хумсемпе çынсем", „Пирĕшти", „Ту тăррисем" тата „Тĕрмери çын" сăввисене куçарнă.

Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарасси вăл почта ямшăкĕ пек пĕр ялтан теприне куçса çӳрени пек çăмăл ĕç мар. Куçаракан сăмахсемпе пуплевсене пăлтăр-палтăр çавăркаласа хума пултараймасть, вăл произведенин формине, ăшчикне пăсмасăр тата таткаламасăр ĕçлемелле, пĕр илемлĕ тĕпренчĕкне те çухатмасăр куçармалла. Çапла вара произведени пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса лартнă çурт пек пĕтĕм илемĕпе вулакансен умĕнче çĕкленмелле.

Иванов умĕнче тĕреклĕ пусса утма маларах хывнă сукмаксем пулман. Ылттăнăн та ахахăн çиçсе тăракан халăх сăмахлăхĕ—фольклор: ваттисем ĕçкĕсенче юрланă, утсем çинче туй каччисем чĕн пушăсем силлесе такмакланă, çĕмĕртсем витĕр курăнакан акăш пек шурă тумлă хĕрсем вăййăсенче юрланă— юрăсем... Çак юрăсем, такмаксем тата халă-

хăн ытарайми чĕлхи литература чĕлхине тумалли çирĕп никĕс пулса тăнă. Анчах та çакă пуянлăхпа усă курас тесен, ăна витĕр пĕлни тата суйласа илни кирлĕ, мĕншĕн тесен, кашни яла тепĕр ялпа танлаштарсан та, эпир калаçура уйрăмлăхсем пуррине сисетпĕр. Литература чĕлхи пурте ăнланмалла пулни кирлĕ. Константин Иванов халăхăн калаçакан чĕлхинчен чи лайăх тĕпренчĕкĕсене пухса кристаллă таса литература чĕлхине пуçласа янă. Эпир Лермонтов произведенийĕсене куçарнисенче Иванов пуçласа янă хăюллă утăмсен сассине илтетпĕр.

Лермонтовăн сăввисенче сăмахсем сăнчăрти ункăсем пек хытă çыхăнса тăраççĕ. Çак çыхăнура таçта вĕççе каяс пек тăвăллă туртăнакан тарăн шухăшсем килсе пĕрлешнĕ. Лермонтов хăйĕн сăввисенче те ун çинчен час-часах пĕлтерет, сăмахран, „Эп Байрон мар, эп урăххи“ ятлă сăввинче вăл хăйĕн кăмăлне океанпа танлаштарать. Хăйĕн кăмăлĕпе шухăшĕсене куç пăвнă асамлă тимĕр карта ăшĕнчи пекех, унăн çарине никам та уçса кĕрес çук пекех шутлать вăл. Анчах пĕр ĕмĕр иртсен, хăй пекех ир шухăшлама пуçланă çамрăк Константин Иванов таланчĕ унăн тимĕр картине уçнă, унăн шухăшĕсене ăста куçарса, чăваш халăхне каласа панă.

„Иван ĕмпӳпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă“—Лермонтов

пултарулӑхӗнче чи хӑватлӑ произведенисенчен пӗри пулса тӑрать тата вӑл халӑх юррисем майлӑ ҫырнӑ пысӑк ӑсталӑхӗпе тӗлӗнтерет. Виссарион Белинский, вырӑссен аслӑ критикӗ, ун ҫинчен ҫапла ҫырнӑ: „Лермонтовӑн поэмине эсир епле кӑна тинкерсе пӑхсан та, пӗр ытлашши е ҫитеймен сӑмах, йӗр, сӑвӑ та сӑнлӑх тупаймӑр; пӗр начар вырӑн та ҫук, пурте унта кирлӗ, тулли, вӑйлӑ!.. Лермонтовӑн поэми—сулмаклӑ япала, пиҫсе ҫитнӗскер, вӑл мӗн чухлӗ илемлӗ, ҫавӑн чухлех халӑхӑн".

Лермонтов ку поэмӑна ҫырнӑ чухне пӗтӗм хӑйӗн хал-хавалне ҫӗкленӗ, халӑх юррисене пӗлнипе питех те лайӑх усӑ курнӑ. Ҫырнӑ вӑхӑчӗ те Лермонтовшӑн питех те хаяр пулнӑ. Патша тӳре-шарисем, 1837 ҫулта аслӑ Пушкина вӗлернине хирӗҫ пӗтӗм чунӗнчен питлесе сӑвӑ ҫырнӑ хыҫҫӑн, Лермонтова Кавказа ссылкӑна янӑ. Литература тӗпчевҫисем кӑтартнӑ тӑрӑх, ҫак поэмӑна Лермонтов Пушкина асӑнса ҫырнӑ. Хаяр патша Иван аскӑн Кирибей сыхлавҫине вӗлернӗшӗн тӳрӗ кӑмӑллӑ та вӗри чӗреллӗ Калашник хуҫан пуҫне пӗр сӑлтавсӑрах кастарать. Калашник, хӑйӗн хисепӗпе чысне сыхласа, чышкӑ вӑрҫинче вараланчӑк чӗреллӗ Кирибее вӗлерни айӑпсӑр ӗҫ пулнӑ. Лермонтов, хӑйӗн чӑн-чӑн шухӑшне пытарас тесе, тахҫан ӗлӗк пулса иртнӗ ӗҫсемпе ҫыхӑнтарса кӑтартнӑ. Чӑнах

та Кирибей Дантес пек, Иван ӗмпӳ I-мӗш Николай патша пек, Калашник—Пушкин пек килсе тухаççӗ. Çак шухăш тӗрӗс иккенни юлашки пайӗнче питех те сисӗнет. Иван ӗмпӳ Калашнике унăн пуçне касас умӗн çапла калать:

„—Эппин юрӗ, ача, сана çакăншăн,
Саттур, паттăр хуçа ывăлӗ,
Чӗререн çапла каланăшăн
Тăлăх ачусемпе çамрăк арăмна
Хыснаран партарăп тивӗçлӗ укçа".

Пӗрремӗш Николай патша вилекен Пушкина: „Эпӗ санăн арăмупа ачусене хыснаран пулăшăп",—тенӗ. Икӗ патша сăмахӗсем пӗр пек пулни литература тӗпчевçисем кăтартни тӗрӗс иккенне пӗлтерет.

Константин Иванов çак поэмăна куçарнă чухне чăваш юррисемпе, туй такмакӗпе лайăх усă курни сисӗнет. Содержанине кӗртнӗ хăшпӗр улăштарусем çинчен каласа хăварас килет, мӗншӗн тесен вӗсене Иванов ăнсăртран мар, юриех тунă.

„И разделют по себе злы татаровья
Коня доброго, саблю острую,
И седельце браное черкасское".

Кирибейӗн çак сăмахӗсене Иванов çапла куçарнă:

„Курайман тăшмансем уйăрса илĕç
Ырă утăмпала çивчĕ хĕçĕме,
Ырă утăм çинчен йĕнерне хывĕç“.

Иванов пур вырăнта та „православный“, „христианский“ тенĕ эпитетсене кăларса пăрахать, поэмăн вĕçĕнче:

Всему народу христианскому
Слава!

тенине те улăштарать:

Мухтав мĕн пур халăха!
Мухтав!

„Христианский“ тата „православный“ эпитетсене кăларса вăркăтни ахальтен пулнă япала мар. Иванов яланах халăх енче тăнă, унăн шухăшне сума сунă. „Христос тĕнĕ ячĕпе“ çаратакан нÿхреп куçлă пупсене халăх чĕринчен курайман, хăйĕн юмахĕсенче те, юррисенче те вĕсене кулăш кустăрми çумне çыхса кустарнă. Тĕн çыннисене курайманни Ивановăн юнĕнчех пынă.

Иванов Лермонтова куçарнă чухне тĕрлĕрен халăх юррисемпе усă курнă. Паллах, вăл тоника системи çинчен шухăшлама пултарайман, анчах шыравĕсенче сăвă музыки май кайса тоника виçи патне сисмесĕрех пынă. Ку енчен „Парус“ сăвва куçарни интереслă.

„Пĕччен парус шуррăн курăнать
Кăвак тинĕс тĕтри ăшĕнче...
Мĕн инçе, ют çĕрте вăл шырать?
Мĕн хăварнă вăл хăй килĕнче?
Чӳхенеççĕ хумсем, çил улать,
Шăтăр-шатăр юпа авăнать...
Анчах парус телей шырамасть,
Телейрен те тарса вăл каймасть"

Çак илсе кăтартнă йĕркесенче пуçĕнчен пуçласа вĕçне çитиччченех малтанхи икĕ сыпăк çине пусăм ӳкмест, виççĕмĕш—пусăмла. Тап-таса анапест виçи! Иванов Лермонтовăн никама та пăхăнман печченçĕ геройлăхне сума сунă. „Парус" сăвăра та пĕрмаях таçта кайма туртăнакан тăвăллă этем кăмăлĕ сисĕнет, анчах вăл телей шырамасть, ăна вăл тупас та çук. Вăл пĕччен, унăн пуранăçра нихçан та канăçĕ çук. Çавăн пекех, пĕччен çĕ юлнă кăмăла „Чул ту" сăвă кăтартса парать:

„Чул ту айккинче
Ылттăн пĕлĕт çĕр каçнă,
Ирех ирхине
Вĕçсе выляса кайнă.
Анчах чул çинче
Нӳрлĕ йĕрĕ палăрать.
Чул ту пĕр пĕччен
Хуллен йĕрет, хурланать".

Иванов Лермонтова куçарнă кăна мар, вăл хăй те ун майлă шухăшпа çырма шутланă.

Ун ҫинчен унăн пултарулăхĕн малтанхи сăнавĕсем каласа параҫҫĕ. Вăл 1907 ҫулхи кĕркунне „Шуйттан чури“ ятлă трагеди ҫырма тытăннă.

„Пĕлĕт саншăн тимĕр пулĕ,
Тĕнче саншăн тамăк пулĕ,
Санăн кĕллӳ тĕтĕм пулĕ“.

Ҫак трагеди умĕнчи сыпăк-эпиграф, пурăнăҫ шăпинчен ниҫта та уйăрăлса каяс ҫук тени, Лермонтовăн геройĕсен тарăхуллă пурăнăҫне аса илтерет. Трагедин кĕске калавĕ ҫапла: пиччĕшĕсемпе тата шăлнĕсемпе пурăннă икĕ тăван, мул пухас ĕмĕтпе, арăмĕсемпе амăшĕн куҫҫулĕсене пăхмасăр, вăрҫа тухса каяҫҫĕ, вилнисен тумĕсене хываҫҫĕ, аманнисен кĕсъисене хыпалаҫҫĕ. Аманнă ҫынсем йăнăшакан вăрҫă хыҫĕнче вĕсен хутаҫĕсенче ылттăн янăрать. Асли тата нумайрах пуяс тесе шуйттанпа паллашать, укҫашăн чунне сутать, шуйттан хĕтĕртнипе хăйĕн шăлнĕне вĕлерсе, унăн укҫине илет, канăҫа пĕлмесĕр мухтанать:

„Текех канăҫсăр ҫынсем
Вăрҫăсенче ҫӳреччĕр!
Мана тата мĕн ҫитмен?
Манăн акă пурте пур.
Ылттăн, кĕмĕл—манăн вăл!
Ялти пуян—эпĕ вăл!

Укҫа пулсан—мул та пур.
Унтан урӑх мӗн кирлӗ?"

Савӑннӑ шуйттан кӗввине итлесе этем ӑсран кайса ташлать.

Эпӗ кунта трагедин пӗррремӗш пайне ҫеҫ илтӗм. Ҫакӑнтан та Лермонтов шухӑшӗн ӳкерчӗкӗ палӑрса тӑрать. Лермонтовӑн „Демон" поэмӑри Тамара ҫунатлӑ эсреле юратнӑ пирки чунне парать пулсан, Иванов геройӗ укҫашӑн чунне сутса ярать. Укҫа кӗвви Ивановӑн „Нарспи" поэмӑра та лайӑх сисӗнет

„Укҫапала эрехех
Ҫынна ӑсран кӑларать".

Укҫа тӗнчинче телейне тупайман Силпи хӗрӗ Нарспи юлашкинчен Кантӑр варӗнче ҫакӑнса вилет. Иванов „Шуйттан чури" трагедине ҫырса пӗтермен. Пӗлӗтелле вӗҫекен романтизм сывлӑшӗпе вӑл вӑрах сывламан, пурӑнӑҫа витӗр пӑхакан реализм юхӑмӗ ӑна часах туртса илнӗ. Иванов вара „Нарспи" поэмӑна ҫырнӑ.

Эпир „Нарспи" поэмӑра та Лермонтовӑнни пек вырӑнсем куратпӑр. „Вӑрманта" пайне Мцыри ача та пиҫӗмлӗ ҫӗрле утнине кӑтартакан тӗлӗпе танлаштарса пӑхар.

„Я убежал. О, я как брат
Обняться с бурей был бы рад.

Глазами тучи я следил,
Рукою молнию ловил".

„Епле Сетнер мĕскĕн-çке
Урнă вăрман ăшĕнче,
Епле çирĕп йывăççем
Юрлаççĕ пуç тăрринче.
Вăрман хĕсĕк çулĕпе
Ăш çуннине пусарса,
Вăрман шавне хуплас пек
Сетнер пырать юрласа".

Эпир кăна вуланă хыççăн икĕ поэт та çанталăкри тата пурăнăçри тăвăла юратнине куратпăр. Вĕсем хăйсен шухăшĕсене канăçсăр вырăнсене кĕртесшĕн, унта хăйсен йывăр пурăнăçне манасшăн. Лермонтов кун пирки „Парус" сăввинче çапла калать:

Канăççăр! Çил-тăвăл шавĕнче
Канлĕх пур пек, тăвăл вăл ыйтать.

Иванов, хăйĕн произведенийĕсене çырнă пекех, Лермонтов произведенисене юратса куçарнă, аслă вырăс поэчĕн вăйне пĕрре те чакармасăр чăвашла пама тăрăшнă. Вăл хăйĕн ĕмĕтне тивĕçлипех пурăнăça кĕртнĕ. Акă Мускав çинчен калакан йĕркесенех илсен те, хăватлă илемлĕх янăрать:

„Ылттăн тăрлă аслă Мускав çине,
Кремль шурă чуллă хӳмисем çине,
Аякри вăрмансен, çӳл тусен енчен,

Çурт-йĕрсен тăррипе выляса, кулса,
Хуп-хура пĕлĕте салатса ярса,
Хĕп-хĕрлех çурăм-пуç хĕрелсе килет,
Хĕп-хĕрлех çурăм-пуç çуталса килет,
Кĕрпе пек юр çине хĕлхемсем ярать:
Сарă хĕр куçкĕски витĕр пăхнă пек,
Кăн-кăвак пĕлĕте вăл пăхса кулать.
Мĕншĕнех, çурăм-пуç, хĕрелсе килтĕн,
Мĕншĕнех савăнса выляса ятăн?"

Лермонтовпа Иванов иккĕшĕ икĕ ĕмĕрте пурăннă пулсан та, вĕсен пурăнăç шăпи пĕр пекех йывăр, пĕр пекех хĕн-хурлă пулнă. Вĕсем иккĕшĕ те çамрăклах çырма пуçланă, хăйсен таланчĕсене сарса çитерейменсĕрех çĕре кĕнĕ. Лермонтов Пĕрремĕш Николай патша саманинчи тискер те тĕксĕм кунсене асăнса çапла çырнă:

„И скушно и грустно! и некому руку подать
В минуту душевной невзгоды...
Желанья... что пользы напрасно и вечно желать?
А годы проходят—все лучшие годы".

Иванов та хăйĕн чăтма çук телейсĕр шăпине асăнса çапла çырать:

„Асап килсен, хĕн килсен,
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем

Иртсе кайрӗҫ тӗлӗк пек.
Асап, хӗн-хур халӗ пур—
Килчӗҫ хура пӗлӗт пек".

Икӗ поэт хӑйсен пурӑнӑҫӗ ҫинчен пӗр пек хурланса юрлаҫҫӗ.

Вӗсем, икӗ туслӑ халӑхӑн икӗ поэчӗ, пӗр-пӗринпе пӗр ӗмӗр урлӑ алӑ парса туслашнӑ. Вӗсем, пӗр пекех генииаллӑ ҫамрӑксем, ҫырма ир пуҫланӑ, патша самани вӗсене иккӗшне те ҫамрӑклах нӳр ҫӗре кӗртнӗ, анчах вӗсен сасси халӗ те ҫӗр ҫинче янӑрать.

Лермонтовпа Иванов пиреншӗн халӗ те чӗрӗ, вӗсем пире тӗлӗнмелле социализмла культура тӑвас ӗҫре пулӑшаҫҫӗ. Аслӑ вырӑс халӑхӗн писателӗсем ытти халӑхсен литературине ӳсме ҫунат парса пыраҫҫӗ. Ивановпа пӗр вӑхӑтра пурӑннӑ чаплӑ тутар поэчӗ Абдулла Тукай(1886—1913) Пушкинпа Лермонтова хӗвел, хӑйне вӗсенчен ҫутӑ илнӗ уйӑх вырӑнне шутланӑ. Иванов та, вырӑс халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗнчен—Лермонтовран хӗлхем илсе, патша саманинчи сивӗ те хура, сирӗлми каҫсенче чӑваш халӑхӗшӗн уйӑх пекех ҫутатнӑ.

1840 ҫулта патша йӗркине чунтан курайман, пуҫ таймасӑр хаяр кӗрешекен чаплӑ критик Виссарион Белинский: „Ҫутта тухнӑ государствӑллӑ 1940 ҫулхи Раҫҫее курма пултаракан ывӑлсен ывӑлӗсене тата вӗсен

ывӑлӗсене вӗчӗхсе тӑратпӑр“,—тенӗ. Эпир—Белинский кӗтнӗ 1940 ҫулта пурӑнакан телейлӗ этемсем. Ҫак ҫул июнӗн 2-мӗшӗнче Константин Васильевич Иванов ҫуралнӑранпа 50 ҫул тулчӗ. 1941 ҫулта Лермонтов вилнӗренпе 100 ҫул тулать.

Пӗтӗм Совет Союзӗнчи халӑхсем ҫак историллӗ вӑхӑтсене хӑйсен пурӑнаҫӗнчи паллӑ числасем тесе хисепре тытса тӑраҫҫӗ.

*Ухсай Яккӑвӗ.*

# ЮРĂ

*(Иван ĕмпÿпе çамрăк сыхлавçă тата сатур Калашник хуçа çинчен хунă юрă).*

Эй, аслă патша, эй, Иван ĕмпÿ!
Сан çинчен эпир юрă хутăмăр,
Ху юратнă чуру, сыхлавçу çинчен
Тата паттăр хуçа Калашник çинчен;
Ĕлĕкхи шайпа юрă хутăмăр,
Кĕслепе вылятса юрра ятăмăр,
Пĕр вуларăмăр, такмакларăмăр.
Ăна ырă халăх итлесе тăчĕ,
Çине аслă улпут Раматан Матви
Куркипех тыттарчĕ пире йÿçĕ пыл,
Унăн шурă питлĕ сарă арăмĕ
Кĕмĕл тиркĕ çинче çĕклесе пычĕ
Пурçăнпа тĕрленĕ çĕнĕ алшăлли.
Виçĕ кун, виçĕ каç хăна пултăмăр,
Çак юрра итлесе тăранаймарĕç сав.

Республиканская
библиотека

Ҫӳлти ылттӑн хӗвел ҫутатса пӑхмасть,
Ун ҫине шур пӗлӗт саванса пӑхмасть:
Ҫав сӗтел хушшинче ылттӑн ҫӗлӗклӗ
Иван ӗмпӳ ларать, хай хаяр патша.
Хыҫӗнче тӑраҫҫӗ кӗрекеҫисем,
Улпутсем, кӗнеҫсем патшана хирӗҫ,
Икӗ айӑккинче сыхлавҫийӗсем;
Хӑй чунне йӑпатса ӗҫкӗ-ҫикӗ тӑвать
Турӑ ырлӑхӗпе ҫак Иван ӗмпӳ.

* * *

Кӑмӑлла пӑхса патша хӑй хушать
Ылттӑнла куркине туллирен тулли
Хаклӑ йышши тутлӑ эрехсем яма,
Сыхлавҫисене ӗҫтерсе тухма.
Вара пурте ӑна мухтаса ӗҫрӗҫ.

* * *

Пӗри ҫеҫ ҫавӑнта сыхлавҫисенчен,
Пӗр паттӑр йӗкӗт, пӗр сатур каччӑ,
Майӑхне йӗпетмест, эрехне ӗҫмест;
Тӗксӗм куҫӗсене ҫӗре чикнӗ вӑл,
Анлӑ кӑкӑр ҫине пуҫне уснӑ вӑл,—
Кӑкӑрӗ айӗнче ҫирӗп шухӑш пур.

Пӗрӗнет ӗмпӗвӗн хура куҫ-харши,
Пӑхать каччӑ ҫине ҫивчӗ куҫӗпе,
Пӗлӗтсем тӑрринчи хурчӑка пекех,
Тытас та ҫиес пек сӑнаса пӑхать,
Ҫӗклемерӗ куҫне йӗкӗт—сар каччӑ.
Ак ӗмпӳ урайне туйипе ҫапать,
Юман урайне ҫур шите яхӑн
Тимӗр вӗҫлӗ туя шӑтарса кӗчӗ,
Хускалмарӗ татах йӗкӗт—сар каччӑ.
Ак ӗмпӳ хыт сӑмах пуҫласа ячӗ;
Вӑранать вара тин йӗкӗт—сар каччӑ.

* * *

„Эй, пӑх-ха кунталла, Кирибей чурам,
Кирлӗ мар шухӑшсем пуҫӑнта ҫук-и?
Е патша мухтавне ӑмсанатӑн-и?
Е ӗҫре ҫӳреме йӑлӑхтарчӗ-и?
Хӗпӗртеҫҫӗ ҫӑлтӑрсем уйӑх тухнӑ чух,
Ҫутӑра выляма лайӑхрах тесе;
Пӗлӗтсем айнелле пытанан ҫӑлтӑр
Ҫавӑнтах ҫӗр ҫине сирпӗнсе анать...
Аван мар-ҫке сана, Кирибей чура,
Патша савӑннӑ чух йӗрӗнсе тӑма;—
Скуратсенӗн йӑхӗ санӑн йӑху-ҫке,
Малюта ҫемьинче эсӗ ӳсрӗн-ҫке!..“

Ак хаяр ҫилĕллĕ патшана ҫапла
Пилĕкрен пуҫҫапса Кирибей калать:

* * *

— Эй, аслă патшамăр, эй, Иван ĕмпӳ!
Юрăхсăр чурана ан ҫилен, патшам:
Ман вĕри чĕреме эрех сивĕтмĕ,
Ман тĕттĕм шухăшăм сăйпа чарăнмĕ!
Ҫилле кӳтĕм сана, патша ирĕкĕ:
Касма хуш пуҫăма, вĕлерттер мана;
Хулпуҫҫи ҫийĕнче усăнать пуҫăм,
Нӳрлĕ ҫĕр патнелле туртăнать пуҫăм.

* * *

Чуринчен ыйтрĕ вара Иван ĕмпӳ:
„Мĕншĕнех йĕкĕтĕн ҫавтер хуйхă пур?
Ҫĕтĕлсе пĕтрĕ-шим тĕрĕллĕ сăкман?
Хутланса пĕтрĕ-шим сăсар ҫĕлĕкĕ?
Саланса пĕтрĕ-шим касмăкри укҫи?
Е хĕрттернĕ хĕҫĕ катăлса пĕтнĕ-и?
Е начар таканран уксах-и лаши?
Е Мускав аслă шывĕ ҫинче ăна
Кĕрешсе ӳкерни хуҫа ывăлĕ?"

Патшана хирĕç Кирибей çапла
Хăй кăтра пуçне силлесе калать:

* * *

— Вăл тухатнă алă çуралман хальччен,
Улпутсен, хуçасен йăхĕнче те çук;
Урхамах пек утăм ташласа çӳрет;
Кĕленче пек çутă ялтăрать хĕçĕм;
Ĕçкĕ-çикĕсенче, эсĕ ырăран,
Ыттинчен каях мар тумланатпăр-ха.

* * *

— Паттăр утăм çине утланса ларса
Мускав шывĕ çине чуптарса кайсан,
Хам пурçăн пиçиххи пилĕке çыхса,
Хуп-хура сăсар çĕлĕке эпĕ
Пуç тăрне тăхăнса чалăшрах лартсан,
Хăмапа çаптарнă хапхасен умне
Яр тухаççĕ çĕнĕ çынсем, сар хĕрсем,
Ман çине пăхаççĕ калаçса кулса;
Пĕри çеç калаçмасть, маң çине пăхмасть,
Чăпар шаль-тутăрпа витĕнсе тăрать...

* * *

— Пирĕн ыра çĕрте, сарлака çĕрте,
Шырасах тупас çук ун пек хитрине:

Ярӑнса утать шурӑ акӑш пек,
Куҫӗпе пӑхать кӑвакарчӑн пек,
Сӑмахне калать шӑпчӑк юрри пек.
Унӑн хӳхӗм чӗри хӗп-хӗрлех-ӗкҫе,
Ирсерен хӗрелсе хӗвел тухнӑ пек;
Ҫӳҫӗсем сап-сарах, ылттӑн пек ҫутӑ,
Хӗрлӗ ҫиптунипе ҫипленӗ ҫивӗт
Хулпуҫҫи урлӑ явӑнса выртать,
Шур ӳтлӗ кӑкӑрне чуптуса выртать.
Вӑл пуян хуҫа ҫемьинче ӳснӗ,—
Вӑл Мӗтри хӗрӗ, Алюна ятлӑ.

* * *

— Ах, ӑна курсанах анӑрать ӑн-пуҫ:
Ҫакӑ паттӑр аллӑн ҫухалать вӑйӗ,
Ҫакӑ ҫивчӗ куҫӑм хуралса каять;
Иывӑр-ҫке, кичем-ҫке, эй, аслӑ патшам,
Ҫакӑ ҫут тӗнчере пӗр-пӗччен ҫынна.
Йӑлӑхтарчӗҫ мана урхамах-утсем,
Йӑлӑхтарчӗ ылттӑн-кӗмӗллӗ тумтир,
Ылттӑн-кӗмӗл укҫа кирлӗ мар мана:
Кампала укҫама уйӑрӑп эпӗ?
Камсене кӑтартас ҫак сатурлӑха?
Камсене кӑтартса мухтанас тумпа?..
Атӑлӑн ҫеҫен хирӗсене яр мана,

Хирсенче пурӑнам, ирӗкре тӑрам,
Ҫак сатур пуҫӑма вӑрҫӑра хурам,
Тӑшманпа ҫапӑҫса вӑрҫӑра пӗтем;
Курайман тӑшмансем уйӑрса илӗҫ,
Ырӑ утӑмпала ҫивчӗ хӗҫӗме,
Ырӑ утӑм ҫинчен йӗнерне хывӗҫ...
Мӗскӗн куҫӑмсене ҫӑхансем чавӗҫ,
Шӑммӑм-шаккӑма ҫумӑр-шыв ҫӑвӗ,
Пытарман кӗлтуман хурлӑхлӑ ӳтӗм
Виҫ-тӑват еннелле саланса кайӗ!.."

* * *

Вара ӑшшӑн пӑхса каларӗ патша:
„Эй, ан хуйхӑр, чурам! эпӗ сан ӗҫн
Эпӗ сан хуйхуна пулӑшӑп пӑртак.
Ахах куҫ ҫӗррӗме сана хам парам,
Тата ылттӑн мӑя хатӗрле хӑна.
Малтан кай, чеерех евӗче пуҫҫап,
Унтан хаклӑ йышши парнесем ярӑн
Хӑвӑн савнӑ хӗрӳ Алюну патне:
Кӑмӑлне килейсен, туйне вӑйлӑ ту,
Кӑмӑлне килмесен, пире ан хурла".

* * *

— Эй, аслӑ патша, эй, Иван ӗмпӳ!
Улталарӗ сана усал чурӑву,

Каламарĕ сана тĕрĕсне-чăнне,
Каламарĕ сана сарă хĕр çинчен,
Качча кайнă-çке çав хуçа хĕрĕ,
Турă çырнă тăрăх, чиркÿ йĕркипе
Пĕр çамрăк хуçапа арлă-арăмлă...

* * *

Ай, ачисем, юрлăр-ха, кĕслĕрсене майласа!
Ай, ачисем, ĕçĕр-ха, ĕçĕрсене астуса!
Кăмăлне кÿрĕр-ха ырă улпутпа
Унăн шурă питлĕ сарă арăмне!

II

Лавкинче сут туса ларать çамрăк хуçа,
Парамун Çтаппанĕ, пĕр сатур каччă,
Хушамачĕпе Калашник хуçа;
Тĕрлĕ пурçăн тавар салатса хурать,
Кăмăлла сăмахпа çынсене кÿртет,
Ылттăнне, кĕмĕлне хисепе кÿрет.
Анчах çамрăк хуçан телей çук паян:
Улпутсем иртеççĕ лавки умĕнчен,
Пĕри те ун патне лавкине кĕмест.

* * *

Чиркÿре пуçланать каçхи кĕлĕсем;
Хĕвел тĕксĕм анать Кремль хыçĕнче;
Сĕм-тĕттĕм пĕлĕтсем капланса килчĕç,
Юрласа хăвалать вĕсене тăвăл;

Сарлака урам та пушанса юлчӗ.
Парамун Ҫтаппанӗ лавкине хупать,
Лавкине хупать вӑл юман алӑкпа,
Нимӗҫле уҫӑпа питӗрсе илет;
Хаяртӑн хаяр лӑкӑрти йытта
Сӑнчӑрпа мӑйӗнчен кӑкарса хурать.
Мускав шывӗ урлӑ килне утрӗ вӑл
Ҫамрӑк арӑм патне, шухӑша кайса.

* * *

Хӑйӗн ҫӳлӗ ҫуртне килсе ҫитрӗ вӑл,
Аптӑрать, тӗлӗнет Калашник хуҫа:
Ӑна хирӗҫ тухмасть ҫамрӑк арӑмӗ,
Шур сӗтел ҫиттипе сӗтелне витмен,
Сӳнес пек ҫункалать кӗтесри ҫурта.
Ватӑ карчӑк-тарҫа йыхӑрса калать:
„Эс кала, кала-ха, ырӑ карчӑкӑм,
Ӑҫталла ҫухалчӗ тӗттӗме кура,
Ӑҫталла пытанчӗ Алюна манӑн?
Манӑн савнӑ ывӑл ачамсем паян
Кунӗпе выляса, ывӑнса пӗтсе,
Иртенех ҫывӑрма вӗсем выртрӗҫ-им?“

* * *

— Эй, ырӑ хуҫам, эй, Ҫтаппан хуҫам!
Халиччен пулманне каласа парам:

Каçхи кĕлле кĕçĕр Алюна карĕ;
Ĕнтĕ пуп та иртрĕ çамрăк арăмпе,
Çуртине çутрĕç те апата ларчĕç,—
Халĕ те пулин санăн арăму
Çывăхри чиркӳрен таврăнмарĕ-ха.
Ачусем-пăчусем халĕ те пулин
Çывăрма выртман та, выляса пăхман,
Макăрса йĕреççĕ, чармалла та мар.

* * *

Сулхăнланчĕ-çке çирĕп шухăшпа
Вара çамрăк пуçĕ Калашник хуçан;
Чӳречи витĕр вăл урама пăхать,
Вăл курать: урамри тĕнче сĕм-тĕттĕм;
Шурă юр тăкăнать, çӳлĕ кĕрт пулать,
Ăна çил вĕçтерет, çын йĕрне шăлать.

* * *

Пăлтăртан илтĕнчĕ: алăк шарт хупрĕç,
Пăлтăртан пĕр этем васкаса кĕрет;
Çаврăнса пăхрĕ те—çырлахсам, турă!
Тăрать-ун умĕнче çамрăк арăмĕ,
Шап-шурах сăнлă хăй, çара пуçăнах,
Сарă çивĕтĕсем саланса кайнă,
Çӳçне те, пуçне те шурă юр пуснă,
Шывланнă куçĕпе ухмах пек пăхать,
Ăнланми сăмахсем тутипе калать.

„Ăçта, арăм, арăм, сулланса çӳрерĕн?
Мĕнле çын патĕнче, камсен килĕнче?
Мĕншĕн санăн çӳçӳ саланса кайнă,
Мĕншĕн санăн тумтир çурăлса пĕтнĕ?
Улпутсен ачисем хушшинче анчах
Ташласа савăнса шав çӳрерĕн-тĕр!..
Çавăн пек хăтланма санпала эпĕ
Арлă-арăмланса мăшăрлантăм-и?
Турăшсен умĕнче тупа турăм-и?..
Питĕрĕп лартăп ак тимĕр уçăпа,
Тимĕрпе тыттарнă алăксен хыçне,
Çакă çут тĕнчене курмасса ӳлĕм,
Варланман ятăма çĕртмессе ӳлĕм..."

* * *

Алюна упăшкин сăмахне илтсен
Чĕтресе карĕ, кăвакарчăнăм,
Ăвăс çулçи пек чĕтрене ӳкрĕ,
Эрленсе хурланса макăрса ячĕ,
Упăшки умĕнче йăванса карĕ:

* * *

„Эй, çутă хĕвелĕм, эй, ырă çыннăм,
Е вĕлер мана, е итле мана!

Каланă сăмаху—çивчĕ çĕçĕ пек;
Çивчĕ çĕçĕ пекех чĕреме касать.
Хăрамастăп хаяр вилĕмрен эпĕ,
Хăрамастăп çынсен чĕлхинчен эпĕ,
Пĕр хăратăп эсĕ сивнесрен анчах.

* * *

„Кĕлĕрен тухрăм та килелле утрăм
Аслă урам тăршшĕпе пĕр-пĕччен паян.
Шурă юр шăтăртатнă пек туйăнчĕ;
Çаврăнса пăхрăм та—пĕр этем чупать.
Ман имшер урамсем хуçăлчĕç анчĕç,
Хам пурçăн тутăрпа хупланса тăтăм.
Ярса илчĕ-тытрĕ аллăма пĕр çын,
Пăшăл-пăшăл хуллен хăй сăмах калать:
— Ан хăра, пикеçĕм, ан хăра манран!
Вăрманти таркăн мар, вăрă мар эпĕ,
Эп хаяр ĕмпĕвĕн юратнă тарçи,
Юратнă чури, Кирибей ятлă,
Манăн чаплă йăхăм Малюта йăхĕ...

* * *

„Ах, тата хытăрах хăраса ӳкрĕм;
Манăн мĕскĕн пуçăм çаврăнса карĕ.
Чуптăвать вăл мана, ăнăма ярать,

Чуптăва, чуптăва йăпатса калать:
— Ах, чунăм, пикеçĕм, кала-ха мана,
Сана мĕн кирлĕ, сана мĕн парас?
Çутă ылттăн кирлĕ-и, ахах чул кирлĕ-и?
Хаклă чул парам-и, е тумтир кирлĕ-и?
Тумлантарăп сана патша арăмĕ пек,
Пурте сан çине ăмсанса пăхĕç.
Çылăхлă чунăма пĕтме çеç ан пар:
Юратсам мана, ытала мана,
Пĕрре те пулин чуптусам савса!

* * *

„Вăл йăпатрĕ мана, вăл чуптурĕ мана;
Вут пекех çунать чĕремĕм çинче,
Халĕ те пулин пĕçерсе тăрать
Ун усал тутисем чуптунă çĕрĕ...
Хапхисем умĕнче кўршĕ-арăмсем,
Пўрнипе кăтартса, кулса çеç тăчĕç...

* * *

„Аллинчен эпĕ туртăнтăм-тухрăм,
Кайăк пек вĕçсе килелле чупрăм;
Тăрса юлчĕç унта, усал аллинче,
Тĕрлĕ явлăкăм, эс парне пани,
Вăрăм шаль-тутăрăм хыванса юлчĕ.

Намăса хăварчĕ! ятăма çĕртрĕ
Айăпсăр арăмна курайман тăшман:
Мĕскер калĕç ĕнтĕ усал кӳршĕсем?
Кам куçне малашне курăнма хăяс?

* * *

„Хăвăн арăмна, тĕрĕс арăмна,
Тăшмансен мăшкăлне ан хăвар мана!
Сан çине шанмасан, кам çине шанас?
Урăх камран эпĕ пулăшу ыйтăп?
Çакă çут тĕнчере тăлăхах юлтăм;
Нӳрлĕ тăпра айĕнче ман аттем çĕрет,
Аттепе юнашар ман аннем выртать,
Манăн аслă пиччем, эсĕ ху пĕлетĕн,
Ют çĕрте, ют енче çухалса карĕ,
Манăн кĕçĕн шăллăм ачапча анчах,
Пĕр ăс-пуç пуçтарман ачапча кăна...

* * *

Эрленсе хурланса вĕри куççульпе
Макăрчĕ-йĕчĕ Алюна çапла.

* * *

Çын ярать, чĕнтерет Калашник хуçа
Хăйĕн икĕ кĕçĕн тăванĕсене;
Килчĕç икĕ тăван, малтан пуç тайрĕç,
Унтан çак сăмаха пуçласа ячĕç:

„Каласам пире, эй, аслă пичче,
Мĕскер пулчĕ, капла, мĕнле ĕç пулчĕ?
Çак тискер кунта, çак сивĕ каç
Мĕншĕн эсĕ пире чĕнтерсе илтĕн?“

* * *

—Каласа кăтартăп, тăванăмсем, сире—
Тискер ĕç пулчĕ çав манпала паян:
Намăса хăварчĕ çемьемĕр ятне
Ĕмпĕвĕн сыхлавçи Кирибей усал;
Çавтерех намăса тӳсес çук чунăм,
Çак сатур чĕремпе тӳсес çук ăна.
Ак ыран ирхине çапăçу пулĕ
Мускав шыв çинче ĕмпӳ умĕнчех;
Çавăн чух тухăп эп сыхлавçа хирĕç,
Виличчен çапăçăп, чунăм тухиччен;
Вăл мана çĕнтерсен, эсир те тухăр,
Тĕрĕслĕх ячĕпе чăн ĕçшĕн тăрăр.
Эй, савнă тăвансем, пĕртте ан хăрăр!
Эсир çамрăк манран, вăйăр та нумай,
Çамрăк пуç çинче çылăх та сахал,
Сире те пулин тен турă çăлĕ-ха!

* * *

Ăна хирĕç çапла ик тăван калать:
„Пĕлĕт айĕ тăрăх çил ăçта вĕрет,

Çумăр пĕлĕчĕ те унталлах шăвать;
Вăрçă хыççăн хирте, вилесем çинче
Кăвак ăмăрткайăк сассипе чĕнсен,
Ĕçкĕ-çикĕ тума, вилесем çиме,
Ун патне чĕпписем пухăнса вĕçет.
Эсĕ пирĕн асли, атте вырăнне:
Мĕн тăвас тесен те, хăвăн ирĕкӳ;
Эпир те тăваншăн тăма пĕлĕпĕр!"

* * *

Ай, ачисем, юрлăр-ха, кĕслĕрсене майласа!
Ай, ачисем, ĕçĕр-ха, ĕçĕрсене астуса!
Кăмăлне кӳрер-ха ырă улпутпа
Унăн шурă питлĕ сарă арăмне!

III

Ылттăн тăрлă аслă Мускав çине,
Кремль шурă чуллă хӳмисем çине,
Аякри вăрмансен, çӳл тусен енчен,
Çурт-йĕрсен тăррипе выляса-кулса,
Хуп-хура пĕлĕте салатса ярса,
Хĕп-хĕрлех çурăм-пуç хĕрелсе килет,
Хĕп-хĕрлех çурăм-пуç çутăлса килет,
Кĕрпе пек юр çине хĕлхемсем ярать;
Сарă хĕр куç-кĕски витĕр пăхнă пек,

Кӑн-кӑвак пӗлӗте вӑл пӑхса кулать.
Мӗншӗнех, çурӑм-пуç, хӗрелсе килтӗн?
Мӗншӗнех савӑнса выляса ятӑн?

* * *

Пухӑнчӗç пӗр çӗре, ак пуçтарӑнчӗç
Мускаври хулари йӗкӗт-паттӑрсем
Мускав шывӗ çине, кӗрешсе пӑхма,
Савӑнма, уçӑлма, аслӑ кун пирки.
Килсе çитрӗ ӗмпӳ хӑйӗн çарӗпе,
Аслӑ улпутсемпе, сыхлавçисемпе;
Пырсанах пӑр çине ылттӑн ункӑллӑ
Çут кӗмӗл сӑнчӑрпа çавӑрма хушрӗ.
Çирӗм пилӗк хӑлаç вырӑн çавӑрчӗç
Пӗр-пӗрерӗн тухма, кӗрешӳ тума.
Вара хушрӗ патша, хӑй Иван ӗмпӳ,
Йӑхӑрма-кӑшкӑрма хытӑ сасӑпа:
„Эй, маттур каччисем, кунта тухӑр-ха!
Патшӑра-аçӑра кӑмӑл тӑвӑр-ха!
Сарлака картана тухса тӑрӑр-ха:
Паттӑра тухнине—патша ырлӑхӗ,
Ал айне пулнине—турӑ пулӑштӑр!"

* * *

Вара тухрӗ тӑче Кирибей йӗкӗт,
Патшана пилӗкрен хуллен пуç тайрӗ,
Паттӑр пӗвӗ çинчен кӗрӗкне хывать;

Хăй сылтăм аллипе пилĕкне тытса,
Сулахай аллипе çĕлĕкне лартать,
Кĕрешме-çапăçма хирĕç çын кĕтет...
Виçĕ хут йыхăрса хытă кăшкăрчĕç—
Пĕр паттăр йĕкĕт те вырăнтан сикмест,
Тĕрткелеççĕ анчах пĕр-пĕрне хăйсем.

* * *

Сарлака картара сыхлавçă çӳрет,
Хăравçах çынсенчен вăл кулса çӳрет:
„Кăмăлăр туртмасть-им, шухăш пусрĕ-им?
Çавтерех хăрасан, эппин юрĕ ĕнтĕ,
Праçник кун пирки, чĕррипех ярăп,
Патшамăр кăмăлне кӳресшĕн анчах".

* * *

Ак сасартăк халăх пăлханса карĕ—
Парамун Çтаппанĕ картана тухать,
Çав çамрăк хуçа, пĕр сатур каччă,
Хушамачĕпе Калашник хуçа.
Тухать те пуççапать патшана малтан,
Кремле, таса чиркӳсене унтан,
Пуççапать кайран пĕтĕм халăха.
Вут-кăвар пекех ялтăрать куçĕ,
Сыхлавçă çине тинкерсе пăхать.

Сыхлавҫа хирӗҫ майланса тӑрать,
Алсине тӑхӑнать ҫапӑҫма-вӑрҫма,
Вӑйлӑ хулпуҫҫине тӳрлетсе илет,
Кӑп-кӑтра сухалне шӑлкалать анчах.

* * *

Хуҫаран ҫапла Кирибей ыйтрӗ:
„Каласа пар-ха эсӗ, ырӑ ҫын,
Кам пулать санӑн аҫупа аннӳ,
Сан мӗнле пулать хушамат-яту?
Кайран кам чунӗшӗн кӗл-тума пӗлем,
Кама ҫӗнтӗм тесе мухтанма юрӗ“.

* * *

Парамун Ҫтаппане тавӑрса калать:
„Эп Ҫтаппан ятлӑ, Калашник хуҫа,
Лайӑх ҫын аттерен ҫуралтӑм эпӗ,
Турӑ хушнӑ тӑрӑх пурӑнтӑм эпӗ:
Мӑшкӑла хӑварман ют ҫын арӑмне,
Вӑр-хурах ҫын пек кӗретмен ҫӗрле,
Ҫутӑ кун ҫуттинчен пытанман эпӗ...
Чӑн каларӑн эсӗ тӗрӗсне-чӑнне:
Ырантан кая мар, кӑнтӑрла тӗлӗпе,
Иксӗмӗртен пӗри тупӑкра выртӗ,
Иксӗмӗртен пӗри хӑй юлташӗпе
Ӗҫкӗ-ҫикӗ туса мухтанса ларӗ;
Шӳт тума, култарма халь тухман эпӗ,

Тухрăм эпĕ паян, тăшман ачи-пăчи,
Хăрушă вăрçа, юлашки вăрçа!“

* * *

Çав сăмахсенчен Кирибей мĕскĕн
Хĕллехи юр пек шуралса карĕ;
Вăй вылян куçĕ хуралса карĕ,
Пĕтĕм ўчĕпе чĕтресе карĕ,
Чĕлхи вĕçĕнчи сăмах чарăнчĕ...

* * *

Пĕр чĕнмесĕр вĕсем уйрăлса тăчĕç,—
Паттăрсем çапăçма пуçласа ячĕç.

* * *

Сулласа сулса Кирибей ячĕ,
Хуçана малтан вăл çапса ячĕ
Пĕтĕм вăйĕпе чĕре тĕлĕнчен—
Лешин паттăр кăкри шăтăрт çеç турĕ,
Парамун Çтаппанĕ тайăлса карĕ;
Киевран илсе килнĕ пăхăр хĕрес
Кăкăрĕ çинче çакăнса тăнă,
Çав хĕрес авăнса ўт ăшне путрĕ;
Айĕнчен, сывлăм пек, юн юхса тухрĕ.
Шухăшласа илчĕ Калашник хуçа:·

„Турă мĕн çырнинчен иртес çук ĕнтĕ,
Чунăм тухиччен чăн ĕçшĕн тăрам!"
Хăй вăйне пуçтарса хатĕрленчĕ те,
Хăйне май килсенех, юлашки вăйпа
Курайман тăшмана пуçранах ячĕ,
Сулахай тăнлавне çĕмĕрсех хучĕ.

* * *

Ак çамрăк сыхлавçă йăнăшса ячĕ,
Тайăлса-тайăлса йăванса карĕ;
Йăванса карĕ сивĕ юр çине,
Сивĕ юр çине çамрăк йăвăç пек,
Пуртăпа тĕпĕнчен касса татăлнă
Сĕм-тĕттĕм вăрманти çамрăк йăвăç пек.
Çав ĕçе курсанах, хай Иван ĕмпӳ
Çиллипе çиленчĕ, урипе тапрĕ,
Хура куçхаршисем пĕрĕнсе тăчĕç;
Çав сатур хуçана тытма хушрĕ вăл,
Паттăра хăй умне çавăтса пыма.

* * *

Каларĕ ĕмпӳ çирĕп сасăпа:
„Тӳп-тӳрех тĕрĕсне чĕререн кала,
Ирĕк ирĕкпе е ăнсăрт пирки,
Халь вĕлертĕн-и чи паттăр çынна,
Кирибей чурама, чи тĕрĕс тарçа?"

* *

—Ăнне калап сана, эй, Иван ĕмпӳ:
Вĕлертĕм ăна ирĕк ирĕкпе,
Мĕншĕнне-мĕнне калас çук сана;
Пĕр турра анчах каласа парăп.
Айăпа кĕтĕм, вĕлерттер мана,
Айăплă пуçăма касма хуш манне;
Ан хăвар ачам-пăчама анчах,
Ан хăвар çамрăк арăма тата
Икĕ шăллăма ырăлăхупа...

* * *

„Эппин юрĕ, ача, сана çакăншăн,
Сатур паттăр çын, хуçа ывăлĕ,
Чĕререн çапла чăн каланăшăн.
Тăлăх ачусемпе çамрăк арăмна
Хыснаран партарăп тивĕçлĕ укçа,
Санăн икĕ кĕçĕн тăванна эпĕ
Çак кунтан малашне патшалăх тăрăх
Куланай-мĕнсерĕх сут-тума хушăп.
Эсĕ ху ĕнтĕ халех кай, ача,
Вилĕм вырăнне, çӳлĕ вырăна,
Ху сатур пуçна çавăнта хума.
Пĕр пуртта хушăп хăйраса хума,
Палача хушăп тумланса тăма;
Сана та эпĕ ырлăх тунине

Пур Мускав çынни астуса тăма,
Чи аслă чана çаптарма хушăп".

* * *

Сарлака урама çынсем пухăннă;
Хуйхăллă чан сасси янăрать, вĕркет,
Таврана вăл усал хыпарсем ярать.
Çӳлĕ вырăн çинче, аслă вырăн çинче,
Хĕп-хĕрлĕ кĕпеллĕ, çап-çутă тӳмеллĕ,
Хăйраттарнă, çивчĕ, пысăк пуртăпа,
Хăй çара аллине вăтăрса шăлса,
Савăнăçлă палач уткалать-çӳрет,
Сатур паттăра вăл кĕтсе çӳрет;
Сатур паттăрĕ, çав çамрăк хуçа,
Чуптуса уйрăлать тăванĕсемпе:

* * *

„Ентĕ, ырă шăллăм-тăвансем, пĕрле
Чуптăвăпăр та ыталашăпăр,
Ĕмĕрлĕх курмасса уйрăлса кайма.
Пуççапăр кайса Алюна патне,
Ытлашши маншăн куççуль ан тăктăр,
Ачасем ашшĕ çинчен ан пĕлччĕр;
Пуççапăр эсир атте кил-çуртне,
Пуççапăр тата пур юлташсене,
Хăвăр кĕлтăвăр турă çуртĕнче
Мĕскĕн чунăмшăн, çылăхлă чуншăн!"

Калашник хуçана вĕлерчĕç вара
Хаяр вилĕмпе, намăс вилĕмпе;
Телейсĕр, мĕскĕн, юнланнă пуçĕ
Кусса анчĕ вара хура çĕр çине.
Мускав шывĕ хĕрне пытарчĕç ăна,
Виçĕ чул хушшине, çеçен хир варне:
Купаларĕç унта нӳрлĕ çĕр купи,
Лартса хучĕç çине вĕрене хĕрес.
Шавласа вĕрет çавра çил унта
Çав мĕскĕн хуçа тăприйĕ тавра;
Яланах унта ырă çын иртет,—
Ватă çын иртет—сăхсăхса илет,
Йĕкĕт çын иртет—çĕкленсе утать,
Сарă хĕр иртет—хуйхăрса каять,
Кĕслеçсем иртсен—юрри ян ярать.

* * *

Эй-эх, маттур каччисем,
Эсир, çамрăк кĕслеçсем,
Йăнтăр-янтăр сассисем!
Ытла хитре пуçласан, хитререх те пĕтерĕр,
Пур çынна та юраса ун кăмăлне çитерĕр:
Мухтав аслă улпута!
Мухтав хитре арăмне!
Мухтав мĕн пур халăха! Мухтав!

## ТУПМАЛЛИ

*Стр.*

Лермонтовпа Иванов . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Юрă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17